ЧУЙĂП МИШШИ



# САВĂТ

30-256

УЙĂП МИШШИ

# АВТОСАВĂТ

ОЂЂЁРК

ЂĂВАШ КЁНЕКИ УЙРĂМЁ
Шупашкар — 1930

Отпечатано в тип. № 1
Чувашгиза г. Чебоксары,
Заказ № 2488
Чувашлит № 1127
Тираж 5.000.

Кам пĕлмест? Пайан Ђулхуларан инçе мар, Монастырккăра, кăнтăрла иртсен 1 сехетре, Автокикант никĕсне хураççĕ. Хаçатсем тахçанах ун çинђен çырса пĕлтернӗ, ђĕнӳ пилеђĕсем те салатнă. Ђĕнӳ (хăна) пилеђĕсем пулсан прахӳтсем те Монастырккăна çитиђђен ахалех илсе кайаççĕ. Ђаплă историллĕ кун... Историллĕ ĕç. Каймасăр йулмалла мар... Анђах пирĕн... пилет таврашĕсем çук. Мĕн тăвас? Çапах кайасах пулаť вĕтха...

— Тавай, çапах кайатпăр. Пире ахаљ те йураť. Тытсан та... нимĕнех те тăвас çук,— тетпĕр хамăр. Ахаљтен мар ђăваша Ђулхулара пит хисеплеççĕ. Тĕлĕнмелле йапала: пĕр касхине пирĕн ађасем столовăйне кĕнĕ те столăвăй хупăнна пулнă. Анђах ађасем: «епĕр, ђăвашсем, инçетрен килнĕ» тесессĕнех ађасене апат çитерсе кăларса йанă. Тата çитменнине укçасăр! Ытти çĕрте те ун пек йапаласем ђасђасах тĕл пулма пулаť. Ĕлĕкхин пек «Ваççил Иванђ» тесе мăшкăласа урăран такăнтармаççĕ иртсе пынă ђухне. Йе кирек-ăçта тăван ђĕлхепе калаçса тăнă ђух иртен-çӳрен «хăш халăх есĕр?» тесе ыйтсан, тăван халăх йатне калама вăтанса пуçа усса тăмастăн, «епĕ ђăваш» тесе çавăрса хуратăн. Ђăваш пулсан, ђăвашах пулас пулаť ăна. (Ђăваш йатне пытаракансем те пур хушăран).

Çапла, «ђăваш» çине шанса 11 сехетре Монастырккăна кайакан Окка прахуђĕ çине мулкаçла йăпшăнса кĕрсе лартăмăр.

...Пĕр сарлака, кĕске лапшака прахут йерипен Окка шывĕ тăрăх антăранă нăрă пек тăвалла ђакаланаť. Такама çӳреме тунă хăйне. Прахут çинђе халăх нумай. Ђулхула хапрăк-савăђĕсен телекатсийĕсем, хĕрлĕ салтаксем, пионерсем, пирĕн пек «ђĕнменнисем»... прахут туллийех шавласа çĕмĕрĕлсе пыраççĕ. Пионерсем вăйă пуçласа йанă, çынсем хушшине ђупса мăйсенђи хĕрлĕ хăмађĕсене вĕлт-вĕлт вĕлтĕртеттереççĕ.

Ăшă май кунĕ. Тӳпе тăрă, кăвак. Хĕвелĕ çурхи сарлака Окка çине ӳксе пурçăн укасем пек йăлтăртатаť. Шыв çийĕ уçă та анлă. Такам йурийех ђӳкенме хушнăлла ђăпăлтатса ђӳхенсе тăраť. Çилĕ... Çилĕ çемçе кушак çурилле йăпшăнса килсе питсене, мăйсене сĕртĕнсе хыçаланса, ађашланса çӳрет. Тăп-тăрă, уçă сывлăшра çурхи ађаш ăшша вĕлкĕштерет. Пăрахут мађтийĕ çинђен виç кĕтеслĕ ђăсăк хĕрлĕ йалава хăйĕн курăнми аллисемпе вĕçĕнђен тытса курăнми куçĕсемпе вăрахăн çавăркаласа пăхаť...

Авă, пĕр йенђе Канавинă, тепĕр йенђе Ђулхула, иккĕшĕ икĕ çыран тăршшипе ђăсăлса курăнми пулса йулђĕç. Пĕр савăт трупи́сем çеç пĕлĕт хĕрринђен хăйсен тĕтĕмпе хуралнă пуçĕсене кăларса нумайђђен куçран пытанмасăр тăнă хыççăн, такам курăнми мăлатукпа шалђана çĕр ăшне çапса кӳртнĕ пек йерипен куçран çухалђĕç. Авă, сылтăм йенђе шывăн çӳлĕ çы-

ранĕ хĕррипе анаталла пуйăс ђупса анса карĕ. Ураписем хурçăпа хурçă çапăннă пирки васкавлăн шаккаса куснине итлесе, хупхура правус трупинђен шапшурă пăс пăлкаса тухса шур сахăр пек сывлăшра ирĕлсе кайнисене çеç пăхса савăнса ларатпăр епĕр...

Прахут малалла шăваť. Прахут çинђи халăх кĕтет. Хăвăртрах Монастырккӑна çитессе кĕтет. Ăна кашнă çын питĕнђенех курма пулаť. Пурте пайанхи кун историре паллă ĕç пулассине пĕлсе, ăна кĕтсе тарăн шухăша кайса уçă тавраналла, кăвак та çутă инçете куçĕсене тĕлленĕ. Ăçта çитмеççĕши вĕсен шухăшĕсем? Мĕнле ĕмĕтсем çавăрăнмаççĕши пуçĕсенђе?..

...Шур акăш пек ђайккăсем пуç тăрринђе йавкаланаççĕ. Хăв шыв çинђе пынине, Монастырккӑна çывхарса Окка тăрăх тăвалла шунине тепĕр хут аса илетĕн... Ђас ак, çитетпĕр... ђуп хĕпĕртет...

...Пĕђĕк шурă пристăњ патне çитсе йунашар ларатпăр. Пристăњ айăккине: «Нижегородский автозавод» тесе çырнă. Кунта, иккен, вăл йапала! Пристăњ патĕнђе çыранра хĕрлĕ йалавсемпе халăх пире кĕтсе тăраť. Прахут çинђен вĕçĕмсĕр халăх тухаť. Епĕр те тухатпăр.

Шыв хĕрринђе. Шыв хĕррипе шурă хăйăрлă çыран тăрăх ђукун çул хурса кайнă. Унтан автăсавăталла тепĕр çул... Епĕр пăрахут çинђен тухсан пĕр çĕре пухăнса тăтăмăр. Пĕри, кунта ĕçлекенсенђен пулас, вакун çине хăпарса тăрса епĕр кунта мĕн тума килнине, мĕн-мĕн курмаллине каларĕ. Ей, ăна епĕр ахалех пĕлетпĕр! Ан та кала! Епĕр автокикант никĕсне хунине кур-

ма килнӗ! Епӗр Ђулхула, Тҫершинск, Сормӑвӑ, Канавинӑ, Палахна ӗҫҫыннисен праҫнӗкне, Пӗтӗм Ђулхула крайӗнђи ӗҫҫыннисен уйавне... ҫук, Пӗтӗм Совет Сойусӗнђи ӗҫхалӑх праҫнӗкне, ђаплӑ ҫӗнтерӳ кунне уйавлама килнӗ. Вӑт мӗн тума килнӗ епӗр... Куна кашнийех пӗлет пайан. Манпа йунашар утса пыракан, ђӗлӗме хыттӑн ҫыртса лартнӑ ватӑ Ђулхула ӗҫлекенӗ те, Тҫершинскран ђӳлмексем тийесе килнӗ пек крусовикпа халӑх тийесе килекен шоффӗр та, мототсиклетпа сывлӑша ваклана Канавинӑ ӗҫҫыннийӗ те, пурте, пурте пӗлеҫҫӗ ӑна.

Вӗтлӗх вӑрман тӑрӑх хӑйӑрлӑ ҫулпа урасемпе хӑйӑра пӑтратса пыратпӑр. Акӑ, сип-симӗс ҫерем. Ђулхулари хӑлтӑр-халтӑр хытӑ ђул хыҫҫӑн симӗс кӗҫҫе пек ҫемҫе ҫерем сине пуссан, хыт сухари хыҫҫӑн ҫемҫе ҫӑкӑр ҫинӗнех туйӑпса кайаҭ. Аван та канлӗ ҫерем тӑрӑх утса пыма.

Окка шывӗ хӗрринђен пуҫласа вӗтӗ, сайра вӑрмана кунта йалт касса тӑкнӑ. Вакунсем ҫӳреме ђукун ҫул йупии кӳрнӗ, тата урлӑ-пирлӗ нумай ансӑр пӗђӗк ђукун ҫулсем хурса тухнӑ. Унта-кунта ҫеҫ хуран пек лакӑм тӗкӗмсем ҫатракасемпе арканса пӗтсе ҫаралса йулнӑ.

Кунта пурнӑҫ вӗрет. Пурнӑҫ пит хӑвӑрттӑн ђупаҭ, ӳсет. Вӑйлӑ Октапӗр хумӗ килсе ҫапӑнса, ӗмӗртен ҫилпе шӑхӑрса тӗлӗрсе ларан вӗтлӗх вӑрман ӑшӗнђе, йешӗл сӑпкари пек сарӑлса выртан йал таврашне ҫӗнӗ сывлӑш кӳртнипе, ҫӗнӗ пурнӑҫ таппи тапма пуҫланӑ. Кунта таттисыпписӗр ђукун ҫулсем тӑрӑх пиншер тоннӑ йӑвӑҫ, хурҫӑ-тимӗр, кирпӗђ, тсемӗнт килсе пу-

шанса тăрат. Ленинкрат, Мускав хаҫăк-савă-ҫĕсенҫен ҫĕршерĕн-ҫĕршерĕн пухăнса килнĕ ĕҫлекенсем ҫĕнĕрен туса лартнă ҫуртсене килсе вырнаҫаҫҫĕ. Кунта ҫĕнĕ пурнăҫ ытла та хыттăн, ытла та пысăк ытамсемпе пуҫланса кайнă. Вăл вĕрет, куллен кун ӳсет... Вăл, кивĕ, лăпкă пурнăҫра, ĕлĕкренхи шăплăха ҫĕмĕрсе вăйлăн, вирлĕн кĕрлесе шавласа тăрат. Пушă тавралăха ҫĕнĕ сывлăшпа ҫĕнĕ саспа тултарат...

...Умра аслă уҫланкă. Авă, инҫетре йĕркипе ҫĕр ҫумне лапҫăнса сыпăҫса ларнă пӳртсем... Вĕсем ҫĕрĕле пуҫланă лăпăска йăвăҫсемпе хупланса кунти ҫĕнĕлĕхрен пытанасшăн пек ларасҫĕ. Ку Монастыркка йалĕ. Унта ĕлĕк мăнастырти манахсемпе манашкăсем хăйсен «таса ĕҫĕсене» туса турра кĕл туса пурăннă. Йал патне ҫитеспе, ҫеремленсе ларнă анасем ҫинҫе хăмасенҫен ҫапса тунă трипунă, хĕрлĕ йалавсемпе илемлетсе пĕтернĕскер, сывлăшра хăйĕн хĕрлĕ ҫунаттисемпе вĕҫсе кайас пек ҫĕкленсе ларат. Ун йĕри тавра халăх... халăх... халăх... Пыл хурҫĕсем хурт амине сăрăнса илнĕ, тейĕн... Уй талккĕшпе автомопил ҫупат... Уй талккĕшпе моттотсиклет, велоҫҫипет... Уйĕпе халăх трипунă патневаскат... Хĕрлĕ тутăр ҫыхнă хĕрарăмсем, хĕрсем... каҫҫăсем... ҫамрăксем, ватăсем... аҫа-пăҫасем... Кам-кам ҫукши вара кунта?.. Пуҫсем ҫинҫе ăҫта кирлĕ унта йалавсем вĕлкĕшеҫҫĕ... Фоттокрăфсем таҫта пушар тухсан, сынсем пушар сӳнтерме пакурсем йăтса ҫупнă пек, аппаратсене йăтса ҫупаҫҫĕ... Йе вĕсем аппараҫĕсене лартса, ҫăмарта тăвас ҫăхла йĕри тавра кускалаҫҫĕ те, ӳкерсе илсе, татах

малалла ҫупаҫҫӗ... Кино-опператтӑрсем те ӑҫта кирлӗ шӑтӑртаттарса лараҫҫӗ. Вӗсем те ҫупаҫҫӗ. Пурте ҫупаҫҫӗ, васкаҫҫӗ... Аслӑ шыв йуххи пек йухан халӑха, унӑн пиншер пиҫӗсем ҫинҫе йӑлтӑртатакан хаваслӑхне, унӑн хытӑ хӑватлӑ, хытӑ ҫупан пурӑнӑҫне ӳкерсе илесшӗн вӗсем, ӳкерсе йуласшӑн... Анҫах ӑҫтан пурнӑҫ йухӑмне йӑлтах ӳкерсе ҫитерес? Пурнӑҫ йухӑмӗ вӑл ҫав тери анлӑ та тарӑн... Хытӑ йухать. Вӑл нихӑш куҫ ытамне те, нихӑш аппрат ӑшне те шӑнӑҫмасть... Ҫапах аппарат ӑшне ӳкмесӗр нумай йулать... Сӑмахран, пайанхи кун совет ҫӗршывӗ тӑрӑх мӗн ҫухлӗ ҫакӑн пекех, вактӗвек тӗрлӗрен хапрӑк-савӑтсем, ҫӗнӗрен колхоссем утарнӑй прикатӑсем никӗслеҫҫӗ пуҫ? Кам пӗлсе ҫитертӗр-ха ӑна? Кам ӳкерсе ҫитертӗр!? Тӑп тӑрӑ сывлӑшра автомопил, моттотсиклет сассисем хӑлхана йӳҫӗхтереҫҫӗ... Итлеме йавӑр та, лайӑх та...

Аран-аран трипунӑ ҫывӑхнерех пырса пуҫа ҫикетпӗр... Умра пилӗкне хӗрлӗ пиҫиххи ҫыхнӑ ҫӗнӗ ҫын пек хӗпхӗрлӗ хӑмаҫӑпа ҫӑрканнӑ трипунӑ. Хӑмаҫҫи ҫине: «ПОСТРОИМ АВТОГИГАНТ В 15 МЕСЯЦЕВ!» тесе пысӑк саспаллисемпе ҫырса хунӑ. Пысӑк саспаллисемпе анҫах та мар, пысӑк шухӑшпа. Ку лосӑнк пайанхи миттӗнкӑн 4 сӑмахпа каланӑ тӗп ӗмӗҫӗ. Ку лосӑнк пролеттариатӑн шантару сӑмаххи. Ку лосӑнк парттипе правиттӗлствӑн ҫивӗҫ хушӑвӗ: 15 уйӑхра автокиканта туса пӗтермелле!.. 1931-мӗш ҫулта, авкустӑн 1-мӗшӗнҫе ҫак ҫара, аслӑ уҫланкӑра вӑйлӑ, пысӑк автокикант ӳсе ларса вӑл кун хатӗр вӑйпа тунӑ малтанхи совет авто-

мопилĕсене кăларса йамалла... Вăл кун пайан никĕсленекен автокикант Совет Сойусĕн ĕçхалăхне, Аслă Совет çĕршывĕн вĕçĕ-хĕррисĕр ђăсăлса выртан çулĕсене кĕскетме, йалпа хулана тата çирĕпрех çыхма хăйĕн çĕнĕ автомопилĕсене парнелемелле.

Тепĕр лосăнк: «По темпу строительства равняться по Турксибу!». Туркçип! Ђаплă сотсиалисăм ĕçне парнеленĕ ĕççынĕн парни! Хăйăрлă хирсене хурçă ређсăсемпе çурса тухса Çĕпĕр çăкрипе Туркестан мамăкне тăванлатнă Туркçипе асăнмасăр çук. Ăçтанха пайанхи куп ăна аса илместĕн? Вăл та револђутсиллĕ ĕçхалăхĕ сотсиалисăмлă çĕршывра хăйĕн вăйĕпе тунă ђи пысăк ĕçсенђен, ђи пысăк ўсĕмсенђен, çĕнтерўсенђен пĕри вĕтха!..

Кăнтăрла иртни пĕр сехет. Трипунă çине партти, правиттĕлствă, профсойус, комсомол т. ыт. орканисатсисен претставиттĕлĕсем хăпарса тăраççĕ. Вĕсем çине çĕршер, пиншер, куç харăссăн тавраран пырса тирĕнђĕç. Кашнийех вĕсем йеннелле пăхнă, кашнийех унтан, трипунă йенђен темскер кĕтет...

Трипунă хĕрне халăх умне пĕр çара пуçăн хĕрарăм ţухса тăрат. Çиле выђаса ăна кĕпе аркисенђен турткалат, йе çўçĕсене пĕрђĕн-пĕрђĕн арпаштарса вĕçтерет, çамкине витерет...

— Йулташсем!..

Хĕрарăм хăйуллăн кала пуçларĕ. Вăл хăйĕн уçă сассипе сăмахсене сулăмлăн умра тăракан пиншер халăх çине ывăтат. Ку—Ђулхула хули Советђĕн претçетаттĕлĕ Çимĕна йулташ. Вăл малтанах миттĕнка пуçтарăннă халăха

ССРС Тĕпĕçтăвкомĕ йаҫĕпе саламлаҫ. Унтан хĕрӳллĕн, çыпăçулла калама пуçлаҫ.

— Епĕр хамăр вăйпах хамăран йăвăр, шултăра интустрийе тăватпăр, тет вăл.— Автокикант пирĕн 5 çуллăх план тăрăх тăван хапрăк-савăтсенҫен пĕри. Автокикант—Совет Сойусĕнҫи ĕçхалăхĕн çĕнĕ çĕнтерӳлĕ пусăмĕ.

— Автокикант туни йалпа хула çыхăнăвне вăйлатнă çĕрте, патшалăх сыхлăх ĕçне çирĕплетнĕ çĕрте питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраҫ... Пĕрер утăмăнах епĕр, сыпăкран сыпăках хамăрăн шултăра промышлĕннăçе туса, ăна çĕнĕрен вăйлă хапрăк-савăтсемпе ӳстерсе, «технĕккă йенҫен малта пыракан кăпиталисăмлă патшалăхсене хăваласа çитсе иртсе кайас» тенĕ çивĕҫ лосăнка пурнăçа кĕртетпĕр...

— Пайанхи кун çак автосавăт пикĕсне хуни хулари кашнă пролеттарин, йалти кашнă патрак, ҫухăн, вăтамăн ҫаплă працнĕкĕ. Вăл працнĕк мĕн пур тĕнҫери пролеттарин працнĕкĕ.

Унтан: «Сывă пултăр... сывă пултăр...» тенисене хăватлăн Интернатсионал сасси витсе лартаҫ...

Ун хыççăн Ҫулхула Крайпарторканисатсин йаҫĕпе Крайком çекреттарĕ Штанăв й-ш тухаҫ. Хура, вăтам патмар çын. Вăл, ҫышкисене ҫăмăртаса, вирлĕн, хыттăн, Ҫулхула крайĕнҫи поҙшевиксен çарĕ пĕр çын пулса пирĕн ума тухса тăрса вуншар пин хурçă пролеттарин вăйлă сассипе хыттăн кăшкăрса каланă пек, пурне те ҫĕрене витермелле калаҫ.

— Епĕр пайан ĕçлекенсен класĕн ирĕкне, совет правиттĕлствин çивĕҫ приккасĕ тăрăх,

комуниссен парттийĕ хушнă тăрăх çулталăкне 140.000 машшин кăларакан автомопил савăҫĕ никĕсне хуратпăр.

— Çак пысăк автомопил савăтне лартса епĕр хамăр патшалăха технĕккă йенҫен малти патшалăхсен йышне хутшăнтаратпăр. Автосавăта туни ĕçлекенсемпе хресҫенсен çыхăнăвне татах çирĕплетни, йалпа хулана пĕр-пĕрин патне çывхартаť.

— Ĕçлекен-çесонĕксем! савăт тăвасси йăвăр анҫах ҫаплă ĕçе тума сирĕн алла шанса панă. Сирĕн çак ĕçре кăпиталисла патшалăхсемпе ăмăртса ĕçлеме ексамĕн тытмалла. Савăта тунă çĕрте кашнă утăма тишкĕрсе тĕрĕслени, криттĕклени кирлĕ. Пирĕн епĕр кăпиталисла патшалăхсене хуса çитсе иртсе кайма пултарнине кăтартас пулаť. Епĕр ăна кăтартатпăр та.

Хĕрӳлленсе хăпарса çитнĕ халăх кăмăлĕ Интернатсионал йуррипе хутăш пиншерĕн «урра!» кăшкăрнă сасăпа çуралса таврари уçланкăна йан! йан! йантраса илеť.

Трипунă çинҫе Коминтерн претставиттĕлĕ Ферти й-ш. Вăл Комуниссен Интернатсионалĕн Ĕçтăвкомĕ йаҫĕпе халăха саламлаť. Тем калаť вăл. Темле ҫĕлхепе калаť, пĕлмелле мар. Анҫах, çав вăхăтрах Ферти йулташ мĕн çинҫен каланине, мĕн каланине пурте ăнланаççĕ. Ăнланманни никам та пулас çук. Вăл: «кăпиталис», «експлоатттатси», «револҫутси» «коминтерн» сăмахĕсене асăнни катаранах вăл мĕн çинҫен каланине пĕлтерет, ăнлантараť.

Йут патшалăхри пролеттарисен претставиттĕлĕ: «Сирĕн 5 çуллăх план пролеттариат тăш-

манёсем каланă пек путалăхран тупнă йапала мар, шухăшласа кăларнă йапала мар, вăлҕăнлăх. 5 ҫуллăх план ҕăн-ҕăнах пурнăҫа кĕрсе пынине пайанхи кун есĕр ҫакăнта автокикант никĕсне хуни кăтартаť...» тет.

Тата нумай каларĕ Ферти. Ферти мар, Комминтерн каларĕ кăна. Кăна тĕнҕери револютси Штапĕ калаť. Вăл ҫакăнта пайан пуханнă ĕҫхалăхне хамăр хуҫалăха интустриленĕ ҫĕрте тата хытăрах вăйа хурса ĕҫлеме ҕĕнет. Пирĕн кĕрешӳ ҫине пăхса кăпиталисла патшалăхсенҕи мĕлйуншар ĕҫҫынни хăй ҫĕршывĕнҕи пусмăрлăхпа, хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешме вĕренни ҫинҕен аса илтерет. Кăпиталисла патшалăхсенҕи револютсиллĕ кĕрешӳ куллен-кун вăйланса пыни ҫинҕен калаť...

...Ăна итлеме шăпланнă тавралăха йанăратса ик-виҫ оркестăрпа тĕнҕе ĕҫҫынниййĕн револютсиллĕ кимĕнĕ Интернатсионал выҕани каллех вăйлăн кĕрлесе кайаť. Ун кĕвви уҫă та йанăравлă. Вăл кашнин ҕĕрине ҫыпăҫу хастарлăхĕпе тустарса ҫĕклентерет...

Пĕлетпĕр епĕр, пурне те пĕлетпĕр! Ҫĕршыва хурҫăланнă ҕух ĕҫре ҫуннă вăхăтрах тĕнҕере мĕн пулса пынине-те лайăх астуса пыратпăр. Совет Сойусĕнҕи ĕҫҫынни пурне те лайăх астуса пыраť. Вăл тĕнҕипех ирĕкшĕн йун тăкакан тăванĕсене те манмасť... Кирлĕ ҫĕрте йаланах пулăшу парса тăраť, йаланах пулăшма хатĕр...

Трипунă ҫинҕе Профинтерн претставиттĕлĕ Корпĕр й-ш. Вăл та пире ăнланмалла мар акăлҕан ҕĕлхипе вирлĕн, аллисемпе таҫталла кă-

тартса, ҫышкисене ҫăмăртаса тытса тем кăшкăрать. Тем калать...

Каллех вăл каланине пурте ăнланаҫҫĕ. Вăл, пайан ҫакăнта автокиканта никĕсне хуни тĕнҫери пролеттаришĕн питĕ пысăк ĕҫ иккенне калать...

Каллех интернатсионал...

Нумай ораттăрсем тухса каларĕҫ. Миттĕнка пухăннă ĕҫхалăхне Крайĕҫтăвкомран Колованăв й-ш, Крайпрофсоветран Сашшипайĕв, Строиттĕлсен тĕп комиттеҫĕнҫен Тсихон тухса саламларĕҫ. Вĕсем пурте ĕҫлекен-строиттĕлсене, метталиссене ушкăнпе мĕн пур вăйпа хурса ĕҫлеме, савăта вăхăтра туса пĕтерме ҫĕнеҫҫĕ....

Татах та нумайăн каларĕҫ. Кашнийех вĕсем сахал та тĕплĕ савăлласа хураҫҫĕ. Кашнийех пирĕн сотсиалисăмлă интустри ӳснине, ĕҫҫыннипе автомопил ҫпне лартма, хресҫенсене тракăтăр ҫпне лартма вăхăт ҫитнине калаҫҫĕ.

Акă, умра Канавинри ĕҫлекен Ҫтеппанăв. Ҫĕлĕкне хывса, халăх умне тухса тăҫĕ. Муталаннă ҫӳҫĕсене ҫил вĕҫтерет. Вăл тата кĕскен:

— Епĕр автосавăт тăватпăр. Окка урлă кĕпер хыватпăр. Тата та нумай пысăк хапрăк-савăтсем тăватпăр. 5 ҫуллăх плана 4 ҫултах туса пĕтерме сăмах паратпăр!.. тесе пĕтерҫĕ хăй сăмахне.

Ун хыҫҫăн Сормăвă ĕҫлекенĕ Волонин, Тҫершинскран Коҫҫанăв тухрĕҫ. Ҫăн йулашкинҫен Канавинран ҫул ĕҫлекенĕ тухрĕ. Умĕнҫе ун ĕҫре вараланса пĕтнĕ шурă саппанĕ вĕҫет.

— Колхоссене, совхоссене вăхăтра автомопил парас тесен, пирĕн автосавăта пайан тума

пуçласа ăна 15 уйăхра туса пĕтерес пулаť. епĕр ăна вăхăтра туса пĕтеретпĕр, тесе шанатпăр!..

Ку калана хыççăн йулашки хут тата вăйлăраххăн Интернатсионал йанăраса карĕ. Вĕсен аллисем тăваççĕ-çке ку савăта... Çавăнпа та вĕсен сăмаххисем те кунта пухăннă ĕççынниссемшĕн питĕ хаклă сăмахсем...

Трипунă çинђе каллех Çиминă йулташ. Вăл савăт никĕсне хуни çинђен сырнă акта вуласа параť.

Миттĕнк пĕтет. Пурте никĕс ваљљи ђавса хунă вырăна куçаççĕ. Никĕс ваљљи ђавса хунă ансăр çĕр хушшине малтан Çиминă, Штанăв анаççĕ. Вĕсем тăхлан паккет ăшне савăт никĕсне хунă пирки çырнă акта ђиксе питĕреççĕ. Унтан ăна ђи тĕпне, ђи малтанхи ђул айне хурса тсемĕнтпа витсе тултарса лартаççĕ. Çапла çак савăт никĕсĕн малтанхи ђулĕ çав акта ĕмĕр-ĕмĕрлĕх пусса выртса айала пулђĕ. Вăл ăна пулас сынсем ваљљи усраť... Тен, тепĕр 1000 çултан çак вырăнта, халиђђен йăлт урăх, прĕклĕ телейлĕ сынсем çав акта тупса вуласа пăхĕç те пайанхи кун çакăнта çапла ђаплă уйав туса малтанхи револђутсиллĕ патшалăхра—Совет Сойусĕнђе пĕремĕш автомопил савăђĕн никĕсне хуни çинђен пĕлĕç...

«Аслă пролеттари револђутсийĕн 13-мĕш çулĕнђе, пин те тăхăр çĕр вăтăрĕмĕш çул, майăн иккĕмĕшĕнђе, савăтри ĕçлекен строиттĕлĕсем, Канавинă, Сормăвă, Мускав, Тçершински, Палахна, Ђулхула тата ытти районри ĕçлекенсен телекатсийĕсем, парт-

ти, профсойуссен тата ђулхула крайёнђи тёрлёрен ытти оркanisатсисен претставиттёлёсем умёнђе пулас автокикантăн пёрёмёш ђулне çакăнта хунă, çавăн çинђен çак акта çырнă»...

Татах ђулсем хурса татах тсемёнт йарса хытараççё. Çёнё автокикант никёсленет. Катара кивё йăвăç тункатисене сирпётсе снаретсем сике-сике кайаççё... Тымар татăккисем, çёр-тăпра тёпренђёкёсем çӳлелле вăркăнса ывтăнаççё, каллех хыттăн çёре анса ӳкеççё...

Кивё тункатасем сирпёнеççё. Кивё тункатасене сирпётес пулаӗ. Вёсем автокикант тума, ăна хăвăрт, вăхăтра туса пётерме ђăрмантараççё... Вăхăђё нумай мар вёт, 15 уйăх!..

Миттёнк пётет. Тавраналла халăх саланаӗ. Умлă хыçлă автомопилсем халăха тийесе авкаланђăк çулсем тăрăх вёçтереççё... Моттотсиклетсем... Велоçипетсем... Халăх пуйăс çине сырăнаӗ. Пирён телейе пайан пуйăс çинђе те укçасăрах çӳретеççё. Йулашки хут автокикант вырăнне, унăн çара уçланкипе пăхса йулатпăр... Ку вырăна ун пек тумпала урăх нихăçан та, нихçан та курас çук. Ку вырăнта урăх, хурçăпа тсемёнт тёнђи ӳссе çитёнё...

Автокикант... 15 уйăх... Кунта пайан праçнёк пулђё пулсан, ыран иртенех хёрӳллё ёç пуçланаӗ... Ыран иртенех пишшер çын, мён пур вăйа хурса ђакалана пуçлаççё... 1931-мёш çулхи авкустăн 1-ђе туса пётермелле... 15 уйăх... калама çеç пит çăмăлçке ăна. Çулталăкне çёр хёрёх пин машшин кăларакан киканта çав кёске вăхăтрах туса лартма ытлах çăмăлах та

марçке вăл... Кам курнă пуљ çавăн пек хăвăрт пулакан ытла та пысăк ĕçе? Кам туса курнă пуљ ун пек пысăк савăта 15 уйăхра?

Ун пек йапалана истори курман. Етемлĕх те пĕлмест. Çавăн пек пысăк савăтсене çав тери пĕђĕк вăхăтра туса пĕтерсе ĕçе тăратма пĕртеп пĕр ĕççынниийĕ çеç, кĕрешӳре пĕрлешсе, ђăмăртанса пиçнĕ ĕççынĕ, сотсиалисăм çулĕ çине тухнă ĕçхалăхĕ çеç тума пултарать. Пĕр вăл çеç. Ĕççынниийĕнђе анђах мĕн пур шанђăк, хăват...

Савăтне тума Америк иншенерĕсем килнĕ. Вĕсемех савăт проекђĕсене те туса хатĕрленĕ. Америкле тĕплĕх, çыпăçуллăх, револютсилле хăвăртлăх—акă мĕн тăвать автокиканта...

Алăра автостроиттĕлстваври ĕçлекенсен «Автокикант» йатлă хаçађĕ. Унта ĕçлекенсен хушшинђи куљттура ĕçĕ, утарнăй прикатăсен ĕçĕ, ăмăрту, пур те пур. Литтераттура странитси те... Унти ĕçлекенсем хушшинђе хăйсен сăвăçисем те пур иккен...

Ку хаçат та автокикант тунă çĕрте пĕђĕк выранах йышăнса тăмĕ. Ун умĕнђе тăракан ĕçсем пысăк та, йăвăр... Анђах йăвăрлăхсем вĕсем пирĕншĕн, хăйсене çĕнтермешкĕн çеç пулаççĕ...

...Пуйăс хыттăн малалла ђупать... Епĕр вакун кантăкĕсенђен пуçсене кăларса таврари кайалла шуса йулан çĕршыва пăхса савăнса пыратпăр. Çӳлтен хĕвелĕ татах ăшшăнтарах кулать. Шухăшсем таçта вĕçеççĕ... Асра: 15 уйăх... Вара килес çулхи авкустăн 1-мĕшĕ... Пĕр çавсене çеç хыттăн астуса йулнă епĕ...

Хакĕ 5 пус.

Уйăп Мишши. АВТОЗАВОД

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары — 1930